24-мӗш ҫул тухать. Хакӗ 15 пус.

1941 декабрь 23 ытларикун 302(6017) №

Чӑваш Коммуни

Пӗтӗм тӗнчери пролетарисем, пӗрлешӗр!

ВКП(б) обкомӗпе Шупашкар хула комитечӗн, ЧАССР Верховный Совечӗн тата Шупашкар хула Совечӗн хаҫачӗ.

Фашистла варварсене ылханатпӑр тата таваратпӑр!

Ясная Полянӑра нимӗҫсем фашистла захватчикӗсем вырӑс халӑхӗн чи паллӑ памятникӗсенчен пӗрне — Лев Николаевич Толстой пурӑнса ӗҫлесе ҫуртне ирсӗррӗн лапӑртса, мӑшкӑлласа хӑварнӑ. Вырӑссен аслӑ писателӗн пирӗн ҫӗршывӑн тата культурӑллӑ мӗнпур этемлӗхӗн хаклӑ памятникне—Ясная Полянӑри паллӑ ҫурт-йӗре—Совет правительстви Государствӑн национальнӑй музейӗ туса хунӑччӗ. Вырӑс халӑхӗн «Война и мир» ятлӑ илемлӗ мӗнле обстановкӑра ҫырнине палласа курма пинӗшер ҫын килсе каятчӗ.

Нимӗҫсем Ясная Полянӑна вӑхӑтлӑха ярса илсе, вырӑссен национальнӑй музейӗнче хӑйсен салтакӗсемпе офицерӗсем валли казармӑсем туса хунӑ. Нимӗҫсем пӗрре мӗнпур музей экспонатсене лапӑртса пӗтернӗ, кайнӑ чухне хӑйсен ... Толстойӑн ҫурт-музейне ҫунтарса ярасшӑн пулнӑ. Толстой пурӑннӑ ҫурт-йӗре нимӗҫсем ... Толстойӑн тӑприне ... хӑйсен фашистла салтакӗсене пытарса, ... шӑршланса кайнӑ вилисене пытарса, Толстойӑн вилтӑприне чыссӑрлатнӑ.

Вырӑс халӑхӗн культурӑллӑ паха памятникӗнчен ҫакӑн пек мӑшкӑллани ӗнтӗ ӑнсӑртран тунӑ япала мар. Ҫак ӗҫе уйрӑм ҫынсем хӑйсен культурӑсӑрлӑхне пула е усал шухӑш тытса тунӑ ӗҫ вырӑнне те шутлама юрамасть. Вӑхӑтлӑха тытса илнӗ Клинра та нимӗҫсем вырӑс композиторӗн Чайковскин ҫурт-музейне ҫавӑн пекех ирсӗррӗн ишӗлтерсе, мӑшкӑлласа хӑварнӑ. Тихвинра та нимӗҫсем вырӑссен ҫак хулара ҫуралнӑ паллӑ композиторӗн Римский-Корсаковӑн музейне аркатса тӑкнӑ.

Вырӑссен хула-музейӗ тесе калама май пур авалхи хулинче, Новгородра, нимӗҫсем авалхи вырӑс ҫӗршывӗнчи искусствӑн — зодчествӑпа живописӗн питӗ паха образецӗсем пулса тӑракан вырӑссен авалхи соборӗсемпе чиркӗвӗсене ҫунтарса янӑ.

Ҫапла ӗнтӗ, нимӗҫсем пирӗн ҫӗршыв тӑрӑх иртсе кайнӑ пур вырӑнсенче те вӗсем хыҫҫӑн пушарсен чӑтма ҫук усал шӑршӑллӑ тӗтӗмӗ мӑкӑрланса юлать, ҫак пушарсенче пирӗн культурӑллӑ пурлӑхсем пӗтеҫҫӗ. Вырӑс халӑхӗн нациллӗ культури кӑшт та пулин палӑракан пур япаласене те нимӗҫсем ҫавтери тискерленсе кайса ватса ҫӗмӗреҫҫӗ, ирсӗрлентереҫҫӗ. Вӗсем Львовра Мицкевичӑн памятникне ишсе антарнӑ, Каневра Шевченкон вилтӑприне ирсӗррӗн мӑшкӑлласа хӑварнӑ.

Нимӗҫ офицерӗсем Толстой ҫинчен те, Чайковский ҫинчен те илтнӗ. Ясная Полянӑна тустарса тӑкнӑ офицер мундирӗсене тӑхӑннӑ бандитсем хушшинче паллӑ генерал Гудериан та пулнӗ. Ҫак ӗҫе ҫав мерзавецсен культурӑсӑрлӑхпе ҫеҫ ӑнлантарса памалла мар. **Ку ӗнтӗ вырӑс культурине «пӗлсе, юри» аркатас политикӑна тытса пыни пулать. Ку ӗнтӗ нимӗҫ погромщикӗсем вырӑс халӑхӗпе вырӑс интеллигенцине курайманни пулать.** Гитлерпа унӑн банди хӑйсем умне вырӑс халӑхӗн, ҫавӑн пекех Совет Союзӗнчи мӗнпур халӑхсен, мӗнпур славян халӑхӗсен культурӑллӑ аталанӑвне чарса лартас задачӑна лартнӑ. Толстойӑн ҫурт-музейне тустарса тӑкнинче, Чайковскин ҫурт-музейне аркатса тӑкнинче, Мицкевичӑн памятникне, Шевченкон памятникне ишсе антарнинче ӗнтӗ нимӗҫ фашизмӗн тӗп шухӑш-кӑмӑлӗ палӑрчӗ, вӑл халӑхсене чуралантарма, ҫак халӑхсен нациллӗ культурине пӗтерсе лартма хапсӑнать.

Гитлерпа унӑн банди Толстоя, Чайковскине, вырӑссен мӗнпур литературине, вырӑссен мӗнпур искусствине ҫавтери курайманҫҫӗ, мӗншӗн тесен вырӑс халӑхӗн генилле писателӗсемпе композиторӗсем ҫак халӑхӑн пысӑк культурине, унӑн тараватлӑхне кӑтартса параҫҫӗ, мӗншӗн тесен вырӑс халӑхӗ хӑйӗн аслӑ ҫыннисен произведенийӗсемпе тӗнчери культурӑна вӗҫӗ-хӗррисӗр пуянлатса пынӑ. Фашистла погромщиксем шӑпах ӗнтӗ пиншер ҫулсем хушши пухса туса пынӑ тӗнчери культурӑна пӗтерсе тӑкасшӑн. Ҫак культурӑна хирӗҫ вӗсем хӑйсен каннибал-ҫынҫиенсен тискер ҫӑйӑкла сӑнсӑпачӗсене кӑларса тӑратрӗҫ.

Фашистсем культурӑна ишӗлтерни Гитлерпа унӑн бандин вӑрӑ-хуралла пӗтӗмӗшле программин уйрӑмлӑх пайӗ пулса тӑраҫҫӗ. Ана культурӑллӑ мӗнпур этемлӗхе хирӗҫ тунӑ. Гитлерӑн вӑрӑ-хуралла империализмӗн пӗтӗм тӗнчери отношенисен пур нормисене те, пӗтӗм законсене те уяма май ҫук. Вӗсем ӗнтӗ Толстойӑн ҫурт-музейне тустарса тӑкса, ҫынсене тискеррӗн асаплантарса вӗлерсе, аманнисемпе пленнӑйсене мӑшкӑлласа, тата пӗтӗм тӗнчери ... мӗнпур договорсемпе конвенцисене пӑсаҫҫӗ, вӗсемех ҫырса алӑ пуснӑ законсене пӑсаҫҫӗ. Вӗсем ӗнтӗ Толстойӑн ҫурт-музейне тустарнӑ пекех, ҫӗршыври пур ҫӗрте те совет хӗрарӑмӗсенчен мӑшкӑллаҫҫӗ, мӗншӗн тесен Гитлерӑн погромщикӗсемшӗн культура ҫук. Фашистсем хӑйсем пырса кӗнӗ ҫӗрсенче ӗҫхалӑхне ... вӗсенчен усӑ курасшӑн, ... лавӑшӗ те ют та тӑшманла пулса тӑраҫҫӗ.

Пин те пилӗкҫӗр ҫул ӗлӗкрех хальхи нимӗҫсен мӑнаслашшӗсем Рима варварла ишсе тустарса тӑкнӑ. Вӗсем искусствӑн классикӑллӑ памятникӗсене тӗп тунӑ, ҫунтарса янӑ, ишсе-ишсе антарнӑ, питӗ хаклӑ та паха алҫырӑвӗсене татӑкӑн-татӑкӑн чӗрсе пӗтернӗ, тӗнчери культурӑна вӗсем ӗмӗрне тӳрлетме май ҫук сиен кӳнӗ. Ҫак авалхи германецсем тӗнчери историе вандал ятпа кӗнӗ, ҫавӑнтанпа ӗнтӗ «вандализм» сӑмах культурӑна тискер кайӑкла, нимӗн шутламасӑр пӗтерсе тӑкнине пӗлтерекен ӗмӗрлӗхех ылханлӑ ят пулса тӑрать.

Анчах та ҫак ӗлӗкхи дикарьсене вӗсен халь пурӑнакан йӑхӗсемпе танлаштарма ҫук. Нимӗҫ халӑхӗн пуҫӗнче халӗ капитализмла пысӑк хуласенче тискерленсе кайнӑ ҫынсем, цивилизацин каяшӗсем, бандитсем, гангстерсем, сутенерсем тӑраҫҫӗ. Государство влаҫне хӑй аллине ҫавӑрса илнӗ бандитран хӑрушӑраххи нимӗн те ҫук. Ҫавнашкал ӗнтӗ Адольф Гитлер, ҫавнашкалах ӗнтӗ унӑн банди те.

Фашистсем пирӗн ҫӗршыври культурӑна аркатса пыни Гитлерӑн вӑрӑ-хуралла империализмӗ пӗтӗм тӗнчешӗн мӗн тери пысӑк хӑрушлӑх пулса тӑнине татах та тепӗр хут кӑтартса парать. Хӑмӑр чумана та, кирек епле чумана пӗтерсе тӑкнӑ пекех, тымарӗ-мӗнӗпех тӑпӑлтарса кӑларса, пӗтерсе тӑкмалла. Вырӑссен совет культурин музейлӑ памятникӗсене нимӗҫсен фашистла ҫарӗсем ишӗлтерни ҫинчен пӗлтерни кашни совет ҫыннин чӗрине ыраттарнине, Толстойпа Чайковскин памятникӗсенчен, Новгородри историллӗ таса та паха япаласенчен, Шевченко вилтӑпринчен мӑшкӑллани вӑл—кашни совет ҫыннин ти таса сисӗмӗсене кӳрентерни пулнине, совет халӑхӗ ҫакӑншӑн ӗмӗрне те каҫарас ҫуккине нимӗҫ халӑхӗ яланах пӗлсе тӑтӑр.

Пирӗн ҫӗршывра Ленин—Сталин партийӗ, Совет правительстви культурӑна, вырӑс халӑхӗн тата ытти халӑхсен культурӑллӑ хаклӑ пуянлӑхӗсене чӗререн сума суса, хисеплеме вӗрентсе, воспитани парса пыраҫҫӗ.

Толстойпа Чайковский ячӗсем кашни совет ҫыннишӗн, пӗтӗм тӗнчери культурӑллӑ кашни ҫыншӑн пекех, питӗ хаклӑ ятсем пулса тӑраҫҫӗ. Ҫавӑнпа та эпир хамӑрӑн аслӑ ҫынсемшӗн, фашистсем асаплантарса вӗлернӗ хамӑрӑн ывӑлӑмӑрсемшӗн, тӑванӑмӑрсемшӗн, аттесемшӗн, фашистла йытӑсем мӑшкӑл тунӑ хамӑрӑн аппа-йӑмӑкӑмӑрсемпе хӗрӗмӗрсемшӗн тавӑрнӑ пекех, хаяррӑн тавӑрӑпӑр.

Кашни фашистра, нимӗҫсен фашистла ҫарӗнчи кашни салтакра, Гитлер бандинчи кашни офицерпа генералӗнче пирӗн боец хамӑрӑн культурӑллӑ пуянлӑхсене ирсӗрлекеннине курать. Пирӗн культурӑна ирсӗрлекенсене—вилӗм!

Фашистла ҫӗлен-калтасене нимӗн шеллемесӗр пӗтерсе пырар!

(«Правда», декабрӗн 21-мӗшӗнчи умстатья).

СССР ВЕРХОВНЫЙ СОВЕТ ПРЕЗИДИУМӖН УКАЗӖ

Генерал-майора Л. М. Доватора Совет Союз Геройӗн званине парасси ҫинчен

Нимӗҫ захватчикӗсене хирӗҫ пыракан кӗрешӳ фронтӗнче Командованин боевой заданийӗсене кӑтартуллӑн пурнӑҫа кӗртнӗшӗн тата ҫак ӗҫре паттӑрлӑхпа хӑюлӑх кӑтартнӑшӑн, **Ленин** орденӗ тата **«Золотая Звезда»** медалӗ парса, генерал-майора Лев Михайлович **Доватора Совет Союз Геройӗн** званине парас.

СССР Верховный Совет Президиумӗн Председателӗ М. КАЛИНИН.

СССР Верховный Совет Президиумӗн Секретарӗ А. ГОРКИН.

1941 ҫулти декабрӗн 21-мӗш.

Совет Информаци Бюровӗнчен

Декабрӗн 20-мӗшӗнчи каҫхи пӗлтерӳ

Декабрӗн 20-мӗшӗнче пирӗн войскӑсем противника хирӗҫ пур фронтсенче те ҫапӑҫнӑ. Хӗвеланӑҫ, Калинин, Кӑнтӑр-Хӗвеланӑҫ тата Ленинград фрончӗсенчи чылай участоксенче пирӗн войскӑсем, противника хирӗҫ хаяррӑн ҫапӑҫса, малалла куҫса пынӑ, халӑх пурӑнакан чылай пунктсене, вӗсен шутӗнче Волоколамск, Плавск хулисене тата Войбокала станцине (Ладога кӳллинчен кӑнтӑрарах) йышӑнса илнӗ.

Декабрӗн 19-мӗшӗнче нимӗҫсенне 6 самолет пӗтерсе тӑкнӑ.

* * *

Декабрӗн 19-мӗшӗнче Хӗвеланӑҫ фронтӗнче кӗрешекен пирӗн летчиксем нимӗҫсен 4 танкне, войскӑсемпе грузсем турттарса пыракан 170 автомашинине пӗтерсе тӑкнӑ тата сиенленӗ, противникӑн 7 полевой орудине прислугисемпе-мӗнӗпех, 2 зенитнӑй батарейине, боеприпассем турттарса пыракан лавсене 100 ытла пӗтерсе тӑкнӑ. чугунҫулӑн 5 составне вут тивертсе янӑ тата боеприпассен складне взрыв туса сирпӗнтернӗ.

* * *

Хӗвеланӑҫ фрончӗн участокӗсенче пӗринче кӗрешекен Тешков юлташӑн чаҫӗсем декабрӗн 19-мӗшӗнче нимӗҫсене халӑх пурӑнакан 12 пунктран кӑларса сирпӗтнӗ тата тӑшманӑнне 15 танк, 10 автомашина, 28 миномет, 4 оруди тата ытти тӗрлӗ хӗҫпӑшал нумай тытса илнӗ.

* * *

Кӑнтӑр фрончӗн участокӗсенчен пӗринче пирӗн подразделени 4 кун хушшинчи ҫапӑҫусенче нимӗҫсен салтакӗсемпе офицерӗсене 1500 ҫынна вӗлерсе пӗтернӗ тата 11 оруди, 53 пулемет, 18 миномет, 27 автомат, 7 автомашина, 65 лаша тытса илнӗ.

* * *

Тула облаҫӗн халӗ нимӗҫсен фашистла захватчикӗсенчен тасатнӑ районӗсенче кӗрешнӗ партизанла отрядсен ҫапӑҫури ӗҫӗсене малтанлӑха шута илсе тухнӑ. Туллимар даннӑйсем тӑрӑх, партизансем юлашки уйӑх хушшинче кӑна нимӗҫсенне виҫӗ ҫар эшелонне ӳпӗнтерсе янӑ, фашистсен 15 танкне ҫунтарса янӑ, тӑшманӑн пехота ларса пыракан тата боеприпассемпе горючи тиенӗ 102 автомашинине сирпӗнтерсе янӑ, артиллерин 5 орудине тата 19 пулемета стройран кӑларнӑ, 35 мотоцикл тата 70 лав пӗтерсе тӑкнӑ. Тула облаҫӗнчи партизанла отрядсенчи боецсем тӑшманӑн салтакӗсемпе офицерӗсене 1200 ҫынна ҫити вӗлерсе пӗтернӗ тата тӑшманӑн чылай штабӗсене ҫӗмӗрсе тӑкас ӗҫре Хӗрлӗ Ҫар чаҫӗсене пулӑшнӑ.

Иван Михайлович Кирюшин, Василий Тимофеевич Гречихин тата Михаил Иванович Мокринский юлташсем ертсе пыракан партизансен отрячӗсем тӑшмана хирӗҫ уйрӑмӑнах ӑнӑҫлӑн ҫапӑҫнӑ.

* * *

Гитлерӑн вӑрӑ-хуралла ҫарӗнчи пыйтланса ҫитнӗ салтаксен ҫапӑҫас хастарлӑхӗ Хӗрлӗ Ҫар хӑватлӑн пыра-пыра ҫапнипе хыттӑнах чакса пырать. Нимӗҫсен вилнӗ салтакӗсем ҫумӗнче юлашки вӑхӑтра тупнӑ ҫырусенче, ҫитес вӑхӑтрах ҫӗнтерӳ тӑватпӑр, тесе каппайса каланисем текех ӗнтӗ тӗл пулмаҫҫӗ. Ҫав ҫырусенче халӗ ӗнтӗ пурнинчен ытларах нӑйкӑшни тата хӑйсен йывӑр шӑпишӗн ӳпкелешни палӑрса тӑрать. Вилнӗ нимӗҫ салтакӗ Вольф Вернер Элизабет Лугол текенскер патне яма ӗлкӗреймен ҫырӑвӗнче ҫапла ҫырать: «Пирӗн пурӑнӑҫ япӑххи ҫинчен ҫырса та кӑтартма ҫук. Ку ҫавтери хӑрушла пыйтӑсем хӑҫан та пулин ухмаха ертсе яраҫҫӗ пулӗ ӗнтӗ». Шульц Штейнмахер салтак килне ҫапла ҫырать: «Раштава пирӗн ӗнтӗ кунтах, пыйтӑсемпе асаплансах ирттерме тивет». Вальтер Рейнгольд салтак патне килӗнчен ҫапла ҫыраҫҫӗ: «Эсӗ сире хурт-кӑпшанкӑсем ҫисе яраҫҫӗ тесе ҫыратӑн. Ку ӗнтӗ питех те аван мар япала. Эсӗ пуҫтури ыйтатӑн, анчах та халӗ пуҫтури тупма ҫук-ҫке-ха. Пирӗн патра халӗ нимайӗшне салтака илчӗҫ те, ҫавсем мӗнпур пуҫтурисене туянса тухса кайрӗҫ». 295-мӗш дивизирен тыткӑна лекнӗ ефрейтор Эрнст Леман ҫапла каласа панӑ: «Салтаксем 6 уйӑх хушши ӗнтӗ кӗпе-йӗмсем улӑштарман, пурин те пыйтӑсем нумай. Эпӗ ҫав тери пыйтланса ҫитрӗм, ҫӗрӗпех ҫывӑраймасӑр асапланатӑп. Салтаксем хӑйсен пурнӑҫне тата вӑрҫа ылханаҫҫӗ. Салтакӑн ҫавнашкал вӗҫӗ-хӗррисӗр асаплӑ пурнӑҫӗ салтаксене йӑлӑхтарса ҫитерчӗ».

* * *

Нимӗҫсен командованийӗ Хӗвелтухӑҫ фронтӗнчен аманнӑ тата тӑм илтерсе янӑ салтаксене Германие пырса кӗме чаракан приказ кӑларнӑ. Тӑм илтерсе янӑ темиҫе пин салтака Грецири тӗрлӗ хуласене ӑсатнӑ та ӗнтӗ. Хӗвелтухӑҫ фронтӗнче нимӗҫсен ӗҫсем начарланнӑҫемӗн начарланса пыни ҫинчен калакан хыпарсене пула, ҫавӑн пекех тата Совет войскисем нимӗҫсен ҫарӗн чылай дивизийӗсене ҫапса аркатни ҫинчен калакан сведенисене пула, ҫӗршывра пӑлхавсем пуҫланассинчен фашистсен пуҫлӑхӗсем шикленеҫҫӗ.

* * *

Мускава хӳтӗлекенсем чаплӑ ҫӗнтерӳ туни совет ҫӗршывӗнчи ӗҫҫыннисене пысӑккӑн хавхалантарать. Мускав патӗнче гитлеровецсене ҫапса салатнине Азербайджанри Октябрьти революци ячӗпе тӑракан заводри рабочисемпе инженерсем ӗҫ нормисене массӑллӑн ирттерсе тултарнипе паллӑ тӑваҫҫӗ. Совет войскисем чаплӑ ҫӗнтерӳ тунӑ ятпа пулнӑ митинг хыҫҫӑн Нахметдинов тимӗрҫ пӗр кун хушшинчех 4 норма ҫурӑ тултарнӑ, тимӗрҫ Якутов норма тӑрӑх 8 деталь туса хатӗрлес вырӑнне 15 деталь туса хатӗрленӗ. Стахановец Карапехтян, пӗр вӑхӑтрах икӗ станок ҫинче ӗҫлеме пуҫласа, кашни станокӗ ҫинчех нормӑна 250-шар процент тултарса пырать. Декабрӗн 15-мӗшӗнче пӗтӗм завод хӑйӗн талӑкри заданине 150 процент тултарнӑ. Хӗрлӗ Ҫар тунӑ ҫӗнтерӳсемпе хавхаланса, Казах ССР-чи Лениногорскри обогатительнӑй фабрикӑра ӗҫлекенсем металл нумайрах кӑларма тытӑннӑ. Ҫӗршыв планран ытлашши вуншар тонна свинец, пӑхӑр тата цинк илет. Акчесайри горнякӗсем, руда тупас тӗлӗшпе ҫулталӑкри плана срокчченех тултарса, социализмлӑ ӑмӑртӑва халӗ татах та вӑйлӑнрах сарса пыраҫҫӗ. Хӗвелтухӑҫӗнчи 5-мӗш участокра руда тупас ӗҫе халӗ кунсеренех 180 процента ҫити тултарса пыраҫҫӗ. Карсакпаевпа Малгедов забойщиксем кашниех икшервиҫшер забойра ӗҫлеҫҫӗ.

Декабрӗн 21-мӗшӗнчи ирхи пӗлтерӳ

Декабрӗн 21-мӗш ҫӗрӗн тенӗ чух ҫӗрле пирӗн чаҫсем противника хирӗҫ пур фронтсенче те ҫапӑҫнӑ.

* * *

Хӗвеланӑҫ фронтӗнчи участоксенчен пӗринче кӗрешекен пирӗн чаҫсем пӗр кун хушшинчи ҫапӑҫусенче противникӑнне 40 танк, 8 оруди, 28 миномет, 135 автомашина тата ытти ҫар пурлӑхӗсем нумай тытса илнӗ. Фронтӑн тепӗр участокӗнче ҫав вӑхӑтрах пирӗн боецсем 24 оруди, 4 пулемет, 35 пин патрон тата ытти трофейӑсем тытса илнӗ.

* * *

Ленинград фронтӗнчи участоксенчен пӗринче пирӗн боецсем хаяр ҫапӑҫусем хыҫҫӑн К. совхоза йышӑннӑ, 300 нимӗҫе вӗлерсе пӗтернӗ, 1 танк, 4 оруди, 14 пулемет, 2 миномет тата ытти трофейӑсем нумай тытса илнӗ.

* * *

Севастополь оборонин секторӗсенчен пӗринче пирӗн боецсем пӗр кун хушшинче нимӗҫсен 5 танкне, 3 танкеткине, 4 бронемашинине тата 7 автомашинине пӗтерсе тӑкнӑ.

* * *

Хӗрлӗ Ҫар пыра-пыра ҫапнӑ пирки Тула облаҫӗн районӗсенчен каялла чакакан нимӗҫсен фашистла мерзавецӗсем хуласемпе ялсенчи мирлӗ халӑха тискеррӗн асаплантараҫҫӗ. Дубно поселокӗнче Гитлер бандичӗсем 42 ҫынна ҫакса вӗлернӗ. Прудная ялӗнче 20 колхозникке чӗрӗллех ҫунтарса янӑ. Алексеевка ялӗнче фашистсем К. Н. Жетевский колхозникке тискеррӗн асаплантарса вӗлернӗ. Фашистла палачсем хӑйсен жертвине аллисемпе урисенчи тӳрнисене пӗрерӗн-пӗрерӗн каса-каса татнӑ тата икӗ куҫне те тӗксе шӑтарчӑ. Гертовая ялӗнчен тухса кайнӑ чух нимӗҫсем колхозниксене ирӗксӗрех темӗнле шыв ӗҫтернӗ. 10 колхозник темиҫе сехетренех вилсе кайнӑ, 15 колхозникке вилес пекскерсене вырӑнти больницӑна леҫнӗ. Колодезная ялӗнче фашистсем нимӗнле сӑлтавсӑрах 50 колхозникпа колхозницӑна персе вӗлернӗ.

* * *

Нимӗҫсен тыткӑна лекнӗ салтакӗсемпе офицерӗсем Хӗвелтухӑҫ фронтӗнче Германи войскисен пысӑк ҫухатусем пулни ҫинчен пурте пӗр ҫын пек каласа параҫҫӗ. Нимӗҫсен 112-мӗш пехотнӑй дивизийӗнчен тыткӑна лекнӗ унтер-офицер Иозеф Тоннер вӗсен дивизийӗнче 5.000 салтак ытла пӗтни ҫинчен калать. Нимӗҫсен 111-мӗш дивизинчен хӑй ирӗкӗпе тыткӑна парӑннӑ салтак Отто Бертран ҫапла каласа панӑ: «111-мӗш дивизире вилнисен, аманнисен тата тыткӑна лекнисен хисепӗ пӗтӗм личнӑй составран 70 процент пулать. Уйрӑмӑнах авиаци пысӑк ҫухатусем кӳрет», тенӗ. Нимӗҫсен 9-мӗш танковӑй дивизинчи 10-мӗш мотострелковӑй полкӗнчен тыткӑна лекнӗ лейтенант Андреас Рихтер ҫапла калать: «Дивизире пӗтӗм боевой составран ҫурри те юлмарӗ ӗнтӗ. 10-мӗш полкри салтаксенчен 60 проценчӗ пӗтнӗ, артиллерин виҫӗ пайӗнчен икӗ пайӗ, хӗҫпӑшалпа ҫар хатӗрӗсем 30 процент пӗтнӗ». Малалла Рихтер чаҫсенче горючи ҫитменни ҫинчен каласа парать: «Горючи тултарнӑ цистернӑсене партизансем нумай пӗтерсе тӑкнӑ. Горючи ҫук пирки машинӑсем килхушшинчен тухмасӑр ларнӑ кунсем — часчасах пулма пуҫларӗҫ». Тыткӑна лекнӗ Иосиф Кнацгофер ҫапла каласа парать: «Юлашки вӑхӑтра апат-ҫимӗҫ питӗ начарланчӗ. Салтаксем ҫуллахи шинельсемпех ҫӳреҫҫӗ, ӑшӑ ҫӗлӗксем ҫук. Апат-ҫимӗҫ ҫителӗксӗррипе тата ӑшӑ обмундировани ҫуккипе кӑмӑлсӑр пулса тарӑхнине салтаксем пытарса тӑмаҫҫӗ» Тыткӑна лекнӗ обер-ефрейтор Иосиф Дитце ҫапла каласа парать: «Халиччен курман йывӑрлӑхсем, выҫлӑх, сивӗсем, —ҫаксем пурте шухӑш-кӑмӑла пусарса лартаҫҫӗ... тата Гитлерӑн юнлӑ политики пирки хытӑ ҫиллентерсе тарӑхтараҫҫӗ».

* * *

Ҫӗршыври машинно-тракторнӑй станцисем тракторсене ҫитес ҫуракине хатӗрлеҫҫӗ. Алма-Ата облаҫӗнче Саркандски МТС тракторсене юсас графика чылаях ирттерсе тултарса пырать. Декабрь уйӑхӗн ҫурри тӗлне кунта, план тӑрӑх 30 машина юсас вырӑнне, 38 машина юсанӑ. Алтай крайӗнчи Топчихински МТС коллективӗ тракторсене юсас ӗҫе январӗн 1-мӗш тӗлне вӗҫлеме сӑмах панӑ. Ҫак обязательство ӑнӑҫлӑн пурнӑҫа кӗрсе пырать. 30 машина юсанӑ та ӗнтӗ. Слесарь Киселев юлташ кашни кунах 2-шер норма тултарса пырать, монтажниксем Резинкин, Меленко тата Баклaнов юлташсем задание 130—140 процент тултарса ӗҫлеҫҫӗ. Машинно-тракторнӑй мастерскойсем хӑйсен вӑйӗпех 50 ытла тӗрлӗ детальсем хатӗрлеҫҫӗ. Алма-Ата МТС-ӗнчи рабочисем 24 пин тенкӗлӗх детальсем юсанӑ.

Декабрӗн 21-мӗшӗнчи каҫхи пӗлтерӳ

Декабрӗн 21-мӗшӗнче пирӗн войскӑсем противника хирӗҫ пур фронтсенче те ҫапӑҫнӑ. Хӗвеланӑҫ, Калинин, Кӑнтӑр-Хӗвеланӑҫ тата Ленинград фрончӗсенчи хӑшпӗр участоксенче пирӗн войскӑсем, противника хирӗҫ хаяррӑн ҫапӑҫса, малалла куҫса пынӑ. Пирӗн войскӑсем халӑх пурӑнакан чылай пунктсене, ҫав шутра Будогоща (Тихвинран кӑнтӑр-хӗвеланӑҫ енче), Грузинона (Чудоворан хӗвелтухӑҫ енче), Крапивнӑна (Тулӑран кӑнтӑр-хӗвелтухӑҫ енче) йышӑнса илнӗ.

* * *

Рокоссовский генералӑн боецӗсем Хӗвеланӑҫ фрончӗн участокӗсенчен пӗринче пӗр кун хушшинчи ҫапӑҫусенче нимӗҫсен 15 танкне, 712 автомашинине, 14 орудине, 3 бронемашинине, 6 тягачне, 8 мотоциклне, 1000 снаряд тата 10 ещӗк мина тытса илнӗ.

* * *

Хӗвеланӑҫ фрончӗн участокӗсенчен пӗринче кӗрешекен Белов генералӑн чаҫӗсем, халӑх пурӑнакан Крапивна пунктне йышӑнса, противникӑнне 1000 автомашинӑна яхӑн тата хӗҫпӑшалсемпе боеприпассем нумай тытса илнӗ.

* * *

Совет автоматчикӗсен групи, Губаренко лейтенант ертсе пынипе, Г. ялӗ ҫине кӗтмен ҫӗртен пырса тапӑннӑ. Хӑюллӑ боецсем, гранатӑсем ывӑтса тата автоматсенчен персе, противникӑн салтакӗсемпе офицерӗсене 100 ҫынна яхӑн пӗтерсе тӑкнӑ.

* * *

Совет войскисем нимӗҫсен фашистла захватчикӗсенчен тасатса ирӗке кӑларнӑ Тула облаҫӗн районӗсенчи колхозниксемпе колхозницӑсем Хӗрлӗ Ҫар чаҫӗсене тата партизансене противника ҫӗмӗрсе тӑкма пулӑшаҫҫӗ. Иртнӗ кунсенче ҫеҫ Быково ялӗнчи колхозниксем нимӗҫ мотоциклисчӗсен подразделенийӗ чакмалли ҫула юр купаласа пӳлсе лартнӑ. Нимӗҫ мотоциклисчӗсем, мӗнпур вӑйпа вӗҫтерсе пырса, кӗрт ӑшне кӗрсе ларнӑ. Вара фашистсем, хӑйсен машинисене пӑрахсах, таврари вӑрмансене тарса саланса пӗтнӗ.

Декабрӗн 13-мӗшӗнче Дубно поселокӗнчен инҫех те мар колхозниксем, сенӗксемпе тата чукмарсемпе хӗҫпӑшалланса, нимӗҫ салтакӗсен ушкӑнӗ ҫине тапӑннӑ та, вӗсене сехрисене хӑпартсах тартнӑ.

Коптевски совхозри рабочисем, нимӗҫсенчен туртса илнӗ винтовкӑсемпе тата автоматсемпе хӗҫпӑшалланнӑскерсем, Н-ски чаҫри красноармеецсемпе пӗрле ҫапӑҫӑва хутшӑннӑ. Ҫак ҫапӑҫура нимӗҫ салтакӗсене нумай пӗтерсе тӑкнӑ.

* * *

Нимӗҫ салтакӗсем хӑйсен тылӗнчен илекен ҫырусем Германири халӑх хушшинче вӑрҫа хирӗҫле шухӑш-кӑмӑлсем ӳссе пынине кӑтартса параҫҫӗ.

Рудольф Штетемайер салтака тӑванӗсем ҫапла ҫырса пӗлтереҫҫӗ; «Штокерауран кайнисем нумайӗшӗсем вилсе пӗтнӗ. Гансен та вилчӗ. Пирӗн пур ҫӗрте те нимӗн те тӑвас килменни палӑрать, шухӑш-кӑмӑлсем пурин те начар. Паян Ниссель Фрауна хӑйӗн упӑшки вилни ҫинчен хыпар пӗлтерчӗҫ».

Густав Алмейер фельдфебель патне арӑмӗ ҫапла ҫырать: «Гаммер вилни ҫинчен килнӗ хыпар мана халранах ячӗ. Пирӗн таврара вӑрҫӑ хӑвӑртрах

Юлашки 2-мӗш страницӑра

ЮЛАШКИ СЕХЕТРЕ

Ленинград фронтӗнчи войскӑсен ҫитӗнӗвӗсем

Ноябрь уйӑхӗн вӗҫӗнче противник войскисен группировки Войбокала районне кӗрсе кайнӑ, ҫапла вара ҫурҫӗр чугунҫулне тытса илме тата Ладога кӳлли ҫыранне тухма ӗмӗтленнӗ. Пирӗн Федюнинский генерал-майорӑн 54-мӗш армин чаҫӗсем хаяр ҫапӑҫусенче противникӑн Войбокала патӗнчи группировкине ҫӗмӗрсе тӑкнӑ. Противникӑн 11-мӗш пехотнӑй дивизин, 291-мӗш пехотнӑй дивизин чаҫӗсене тата 254-мӗш пехотнӑй дивизин 2 полкне пуҫӗпех ҫапса аркатнӑ. Войбокала районӗпе Войбокала станцине пирӗн войскӑсем йышӑннӑ. Войбокала енчи ҫапӑҫусенче противникӑн 5.000 ҫын ытла вилсе юлнӑ. Пирӗн войскӑсем противникӑнне: тӗрлӗ калибрлӑ 55 оруди, 21 танк, 91 пулемет, 39 миномет, 250 винтовка тата автомат, 90 грузовой автомашина, 12 ҫӑмӑл автомашина, 100 мотоциклпа велосипед, 85.000 патрон, 4.000 снаряд, 70 ещӗк мина, 500 граната тата ытти тӗрлӗ ҫар пурлӑхӗсем нумай тытса илнӗ. Ҫав пурлӑхсене халӗ пӗтӗмпех шута илсе тухас ӗҫ пырать. Пирӗн войскӑсем противника хыҫран хӑваласа пыраҫҫӗ.

СОВИНФОРМБЮРО.

Хӗвеланӑҫ фронтӗнчи войскӑсем декабрӗн 17-мӗшпе 20-мӗш числисем хушшинче тытса илнӗ трофейӑсем

Хӗвеланӑҫ фронтӗнчи войскӑсем декабрӗн 17-мӗшпе 20-мӗш числисем хушшинче противникӑнне ҫакӑн пек трофейӑсем тытса илнӗ: 7 самолет, 360 танк, 519 оруди, 161 миномет, 267 пулемет, 3.059 автомашина, 28 бронемашина, 35 трактор.

Ҫав шутран Волоколамск патне пымалли вырӑнсенче тата хулара хӑйӗнче пулса иртнӗ ҫапӑҫусенче ҫак трофейӑсене тытса илнӗ: 73 танк, 91 оруди, 31 пулемет, 577 автомашина, 4 бронемашина, 35 трактор.

Декабрӗн 17-мӗшпе 20-мӗш числисем хушшинче Хӗвеланӑҫ фронтӗнче нимӗҫ салтакӗсемпе офицерӗсене 10.090 ҫынна пӗтерсе тӑкнӑ.

СОВИНФОРМБЮРО.

Профсоюзпа комсомол организацийӗсем Хӗрлӗ Ҫар 24 ҫул тултарнӑ ятпа тӑвакан йӗлтӗрлӗ кросс

ВЦСПС президиумӗпе ЦК ВЛКСМ 1942 ҫулти февралӗн 1-мӗшпе 23-мӗш числисем хушшинче Хӗрлӗ Ҫар 24 ҫул тултарнӑ ятпа профсоюзпа комсомол организацийӗсен йӗлтӗрлӗ кросне ирттерме йышӑннӑ.

Ҫак кроса хатӗрленсе ирттерме районсенче, хуласенче, облаҫсенче, крайсенче тата союзлӑ республикӑсенче оргкомитетсем тӑваҫҫӗ.

Кросс программинче — ГТО-н пӗрремӗшпе иккӗмӗш сыпӑкри тата БГТО-н йӗлтӗрпе ҫӳремелли нормативӗсем тӑрӑх ӑмӑрту туса ирттересси.

Кроса мӗнпур профсоюз тата комсомолӑн пуҫламӗш организацийӗсем, ҫавӑн пекех мӗнпур ӗҫҫыннисем, подразделенисене: отделенисене, взводсене, ротӑсене организациленсе, хутшӑнма пултараҫҫӗ.

Профсоюзсемпе комсомол организацийӗсене ҫак кроса хатӗрленес тӗлӗшпе чылай ӗҫсем туса ирттерме хушнӑ: йӗлтӗрпе ҫӳрес тӗлӗшпе ӗҫҫыннисен массӑллӑ ӑмӑртуне туса ирттермелле, йӗлтӗрпе ҫӳрекенсем хушшинче пӗтӗм районӗпе е хулипе мала тухассишӗн ӑмӑрту туса ирттермелле, кроса хутшӑнас текенсене пурне те малтанах медицина тӗлӗшпе пӑхса тухмалла, судьясен коллегисене тумалла. (ТАСС).

Военизированнӑй поход

ВӐРМАР. Комсомолӑн пуҫламӗш организацийӗ пуҫарнипе, нумаях пулмасть спортинвентарь фабрикинчи комсомолецсемпе ҫамрӑксен военизированнӑй поход туса ирттернӗ. Похода 23 ҫын хутшӑннӑ. Участниксем винтовка, граната йӑтса, йӗлтӗрпе 8 ҫухрӑма 1 сехет те пӗр секундӑра кайса килнӗ. Унта вӗсем тӗрлӗрен чӑрмавсем тӗл пулнӑ. Ҫапах походран пурте аванах таврӑннӑ. Фабрикӑри ҫамрӑксем халь ҫавӑн пек походсене кашни эрнерех туса ирттерме йышӑннӑ.

А. АВЕРЬЯНОВА.

Ҫар ӗҫне вӗренеҫҫӗ

КУКЕҪ. Районри ӗҫҫыннисем ҫар ӗҫне тӑрӑшсах вӗренеҫҫӗ. ПВХО 1-мӗш тата 2-мӗш ступень нормисене паянхи куна районра 9200 ҫын, вӗренекен ачасем—4080 ҫын панӑ. Винтовкӑран тӗл пеме 2514 ҫын, пулеметран пеме 22 ҫын, танксене хирӗҫ кӗрешме 30 ҫын вӗрентсе хатӗрленӗ. Танксене хирӗҫ кӗрешме вӗренмелли кружокра татах 30 ҫын вӗренет.

Т. ЛОГИНОВ.

Совет Информаци Бюровӗнчен

Декабрӗн 21-мӗшӗнчи каҫхи пӗлтерӳн вӗҫӗ

пӗтессе ӗмӗтленмен, кӗтмен ҫын ҫук та». Альфред Рихтерӑн аппӑшӗ-йӑмӑкӗсем хӑйсен ывӑлне ҫапла пӗлтереҫҫӗ: «Раухдоде, Фриц Шлоссер, Ганс Майснер, Прейс, Винер, Карл Фарнер вилнӗ. Пур ҫӗрте те ҫавӑн пекех. Пур ҫӗрте те инкек-синкек». Вилли Элингер хӑйӗн пиччӗшӗ Эрнст Элингере обер-ефрейтор патне ҫапла ҫырать: «Эпӗ сана пирӗн Карла вӗлерни ҫинчен ҫыр-са пӗлтерес тетӗп. Ҫапла ӗнтӗ вӗсем пӗрин хыҫҫӑн тепри пӗтсе пыраҫҫӗ. Карл Кронштейн та вилнӗ. Юлашкинчен ҫак вӑрҫӑ пире мӗн курсе пырать-ха? Ман шутӑмпа, вӑл пире ыррине нимӗн те памасть. Ҫухатусем, юнлӑ ҫухатусем, татах та тепӗр хут юнлӑ ҫухатусем. Час-часах ҫакӑн пек хӑрушӑ ыйту тухса тӑрать: мӗншӗн? Пӗтӗмӗшпе илсе шутласан, ҫак вӑрҫӑ кирлӗ пулнӑ-ши? Нимӗҫ халӑхӗн хӑйӗн юнне мӗншӗн юхтарма тивнине эпӗ ниепле те ӑнланса илейместӗп. Гитлерӑн мӗнпур Европӑна ҫӗнтерсе илме май килсен, рядовой нимӗҫ ҫынни мӗнех илӗ-ши вара? Асаплӑх, сӑмахпа каласа пама май ҫук асаплӑх».

* * *

Декабрӗн 15-мӗшӗнче совет войскисем нимӗҫсен фашистла захватчикӗсенчен Клин хулине туртса илсе ирӗке кӑларчӗҫ. Фашистла варварсем хӑйсем хуҫаланнӑ вӑхӑтра хулари мирлӗ халӑха вӗлернӗ, ҫаратнӑ, 2 шкула ҫунтарса янӑ, лечебницӑна взрыв туса сирпӗнтернӗ, хулари культурӑллӑ хаклӑ япаласене тискеррӗн пӗтерсе тӑкнӑ. Паллӑ композиторӑн, вырӑссен тата тӗнчери музыка искусствин классикӗн Петр Ильич Чайковский ҫурт-музейне ҫав тери ирсӗррӗн мӑшкӑлласа хӑварнӑ. Ҫак ҫуртра Чайковский хӑйӗн ӗмӗрӗн юлашки ҫулӗсене пурӑнса ирттернӗ пулнӑ. Ҫакӑнта вӑл хӑйӗн Ултӑмӗш симфонине, «Пиковая дама» оперине тата ытти пысӑк произведенийӗсене ҫырнӑ. Декабрӗн 21-мӗшӗнче ҫурт-музейӑн сотрудникӗсемпе хулари ҫынсен группи Гитлер бандичӗсем Чайковский памятникӗнчен мӑшкӑлласа мӗнтери пысӑк преступлени туни ҫинчен акт ҫырнӑ. Актра ҫакна кӑтартса панӑ: нимӗҫ вандалӗсем сӗтел-пукансен, кӗнекесен, нотӑсен, культурӑллӑ ӳкерчӗксен пӗр пайне урама кӑларса сирпӗтнӗ, пӗтерсе тӑкнӑ. Аслӑ композиторӑн кабинетне, гостинӑйне тата музыка пӳлӗмне таса мар та шӑршӑллӑ притон туса хунӑ. Композиторӑн ӗҫ пӳлӗмӗсенчен пӗрне нимӗҫсем тула тухмалли вырӑн туса хунӑ. Нимӗҫ варварӗсем музейӑн пурлӑхӗсене пухса ҫартнӑ епӗксене ватнӑ та, мӗнпур пурлӑха мӑшкӑлтӑк шыв ямалли шӑтӑка кайса пӑрахнӑ. Темӗн пек хаклӑ сӗтел-пукансене, гравюрӑсене, кӗнекесене, ҫавнашкалах тата кабинет стенине сӑрнӑ ӗывӑҫ хӑмисене ҫунтарса янӑ. Композиторӑн бюстне паллама ҫук пӑсса пӗтернӗ те юр ҫине тула кӑларса пӑрахнӑ. Нимӗҫсен фашистла варварӗсем, вӑрӑ-хурахӗсем аслӑ композитор ученикӗн тата тусӗн Танеевӑн пианинине, Чайковскин ҫуллӑ сӑрпа ӳкернӗ портретне, музейӑн татах темӗн чухлӗ пурлӑхне илсе тухса кайнӑ.

Акт ҫине ҫак ҫынсем алӑ пуснӑ: музыковед Ритцих, музейра ӗҫлекен рабочисем Шаршель, Киров, Мигуляева, Воробьева, ҫурт-музейӗн библиотекарӗ Флеров, Клин хулинчи ҫынсем Петров, Калугин тата Бекренева.

Декабрӗн 22-мӗшӗнчи ирхи пӗлтерӳ

Декабрӗн 22-мӗш ыран тенӗ чух ҫӗрле пирӗн войскӑсем противника хирӗҫ пур фронтсенче те ҫапӑҫнӑ.

* * *

Хӗвеланӑҫ фронтӗнчи участоксенчен пӗринче кӗрешекен Болдин генералӑн войскисем икӗ эрне хушши ҫапӑҫса халӑх пурӑнакан 720 пункта ирӗке кӑларнӑ. Нимӗҫсен 12 самолетне, 143 танкне, 660 автомашинине, 383 мотоциклне, 101 орудине, 222 пулеметне, 84 минометне тата ытти ҫар пурлӑхӗсене нумай тытса илнӗ е пӗтерсе тӑкнӑ.

* * *

Пирӗн Ленинград фронтӗнче кӗрешекен пӗр часть, противника хирӗҫ хаяррӑн ҫапӑҫса, нимӗҫсен йывӑҫпа тӑпраран тунӑ икӗ точкине, 7 блиндажне, 3 минометне, артиллери батарейине пӗтерсе тӑкнӑ тата противникӑн салтакӗсемпе офицерӗсене 500 ҫынна ытла вӗлерсе пӗтернӗ.

* * *

Харино ялӗшӗн ҫапӑҫнӑ чухне совет танкисчӗ Фомичев юлташ хӑйӗн танкӗн гусеницисемпе таптаса противникӑн танка хирӗҫ пемелли орудине тата нимӗҫсен 160 салтакне пӗтерсе тӑкнӑ. Ҫав ҫапӑҫурах Пугачев юлташӑн танкӗ танка хирӗҫ пемелли 2 орудине пусарса лартнӑ, нимӗҫсен салтакӗсемпе офицерӗсене 90 ҫынна вӗлерсе пӗтернӗ. Танк командирӗ старший сержант Баранбай питех те тӗл персе нимӗҫсен 4 автомашинине, 4 пулеметне тата тӑшман пехотин взводне пӗтерсе тӑкнӑ.

* * *

Украинӑн нимӗҫсем оккупациленӗ районӗсенче кӗрешекен партизансен отрячӗсем фашистла захватчиксене ӑнӑҫлӑн пӗтерсе пыраҫҫӗ. Н. ялӗнче Итали салтакӗсен подразделенийӗ канма вырнаҫнӑ пулнӑ. Д. юлташ ертсе пыракан партизансен отрячӗ тӑшмансем ҫине кӗтмен ҫӗртен пырса тапӑннӑ та 10 фашиста пӗтерсе тӑкнӑ. М. юлташ ертсе пыракан партизансен групни нумаях та пулмасть нимӗҫсен чаҫӗн штабӗ ҫине хӑюллӑн тапӑннӑ. Фашистсен штабӗ пулнӑ ҫурт патне вӑрттӑн ҫывхарса пырса, М. юлташ чӳречерен граната ывӑтнӑ. Паника пуҫланса кайнӑ. Нимӗҫсем урама чупса тухма хӑтланнӑ, анчах вӗсене хирӗҫ татах та граната ывӑтнӑ. Виҫӗ офицера тата 20 салтака вӗлернӗ. Штаба ҫӗмӗрсе тӑкса, совет патриочӗсем хаклӑ документсем тытса илнӗ те Хӗрлӗ Ҫар командованине пырса панӑ. Х. станцийӗ патӗнче партизансен О. юлташ ертсе пыракан отрячӗ нимӗҫ салтакӗсемпе боеприпассем турттарса пыракан поезда тӳнтерсе янӑ. Ҫак отрядах тӑшманӑн салтакӗсем ларса пыракан автомашинӑна пӗтерсе тӑкнӑ. П. юлташӑн партизанла отрячӗ водопровода ҫӗмӗрнӗ тата икӗ ҫӑла тултарса лартнӑ, вӗсемпе Италин кавалери чаҫӗсем усӑ курнӑ пулнӑ. Ҫав отрядах фураж складне ҫунтарса янӑ тата фашистсен 15 салтакне пӗтерсе тӑкнӑ. Т. юлташӑн партизанла отрячӗ кӗске вӑхӑт хушшинчех боеприпассем турттарса пыракан 84 автомашинӑна пӗтерсе тӑкнӑ, фашистсен салтакӗсемпе офицерӗсене 250 ҫынна вӗлерсе пӗтернӗ. К. юлташӑн партизанла отрячӗ фашистсен карательнӑй отрядри 11 салтакне вӗлерсе пӗтернӗ.

* * *

Пирӗн чаҫсем хӗссе пынине пула Кӑнтӑр-Хӗвеланӑҫ фронтӗнчи чылай участоксенчен каялла чакса, нимӗҫсен фашистла мерзавецӗсем совет хулисемпе ялӗсенчи мирлӗ халӑха тискеррӗн асаплантараҫҫӗ. Высокое ялӗнче гитлерла бандитсем 70 хресчене, тыткӑна лекнӗ тата аманнӑ 20 красноармеца сунтарса янӑ. Роговое ялӗнчен чакнӑ чухне нимӗҫсем хӑйсем хӗрарӑмсемпе ачасене хӑваласа пухнӑ нӳхрепе гранатӑсем ывӑтса хӑварнӑ. Нимӗҫсенчен ирӗке кӑларнӑ Гетьмановка ялӗнчи колхозница Варвара Илларионовна Маргарицская ҫапла каласа парать: «Ман пата киле нимӗҫсен икӗ салтакӗ ҫӗр каҫма пычӗҫ. Ҫӗрле манӑн 7 уйӑхри ача йӗрме тытӑнчӗ. Вара бандитсенчен пӗри ачана урама кӑларса ывӑтрӗ». Варваровка ялӗнче фашистсем 12 хӗрарӑмпа ачасене подвала хӑваласа пухнӑ та унта ҫунакан улӑм пӑрахнӑ. Кайран пӑчӑхса вилнӗ хӗрарӑмсемпе ачасен виллисене нимӗҫсем урама кӑларса пӑрахнӑ. Вӗсене пытарма вырӑнти халӑха чарнӑ.

* * *

Советӑн паттӑр хӗрарӑмӗсем, нимӗҫсен фашистла захватчикӗсене пӗтерсе тӑкма Хӗрлӗ Ҫара пулӑшса, Хӗрлӗ Хӗрес дружинницисен ретне кӗреҫҫӗ. Хӗрлӗ Хӗресӗн Мускав облаҫӗнчи организацийӗсем кӑна, вӑрҫӑ пуҫланнӑранпа курссенче вӗрентсе, дружинницӑсемпе медицина сестрисем пулма 3.000 ҫынна хатӗрленӗ. Вӗсенчен нумайӗшӗ МПВО штабӗсенче, фронтра, санитари поезчӗсенче тата госпитальсенче ӑнӑҫлӑн ӗҫлеҫҫӗ.

Нумаях та пулмасть фашистла бандитсем 100-мӗш номерлӗ санитари поезчӗ ҫине бомбӑсем пӑрахнӑ. Пысӑк хӑрушлӑх пулнӑ пулин те, дружинницӑсемпе сестрасем йывӑр аманнӑ боецсене вагонсенчен илсе тухнӑ та вӑрмана илсе кайнӑ. Дружинница Вера Исаева аманнӑ боеца тӑшман бомбин ванчӑкӗсенчен хӑйӗн ӳчӗпе хӳтӗлесе илсе пынӑ. Суранланнӑ пулин те, Исаева юлташ боецсене сыхласа хӑварас тӗлӗшпе малаллах ӗҫленӗ. Клин районӗнчи дружинницӑсем Маруся Кариванова, Клавдия Рогожина тата ыттисем те 50 ҫыннӑн пурнӑҫне сыхласа хӑварнӑ, вӗсене ҫунакан ҫуртран илсе тухнӑ. Мускав облаҫӗнчи Дмитров районӗнчи дружинницӑсем — Уткина, Чекунова, Широкова, Емельянова тата совет ҫӗршывӗн совет патриоткисем паттӑррӑн ӗҫлеҫҫӗ.

Руза хули пирӗн алӑра

Руза хулине каймалли ҫул фронт тӑрӑх выртать. Сулахайра чарӑна пӗлмесӗр тупӑран пенисем, минӑсемпе снарядсем ҫурӑлса кайнисем кӗмсӗртетеҫҫӗ, автоматсемпе пулеметсем шатӑртатни илтӗнет. Нимӗҫсем пирӗн наступленине, уйрӑмах эпир Рузӑран кӑнтӑр-хӗвелтухӑҫ еннерех тӑвакан атакӑсене, тытса чарас тесе, хӑйсен мӗнпур средствисене мобилизациленӗ. Хӑйсен арканса пӗтнӗ войскисен юлашкийӗсем чакса пынине хӳтӗлес тесе, нимӗҫсем минометсенчен чарӑна пӗлмесӗр пеме тытӑнаҫҫӗ, хӑйсене пулӑшма истребительсемпе бомбардировщиксене чӗнсе илеҫҫӗ, хӑшпӗр вырӑнсенче контратакӑсем те пуҫласа яраҫҫӗ. Говоров генералӑн чаҫӗсем ҫапӑҫӑва кӗрсе кайса тӑшмана хӗсеҫҫӗ, ӑна сире-сире пӑрахаҫҫӗ.

Паян Соловьев полковникӑн боецӗсемпе Антонов юлташӑн танкисчӗсем Руза хулин варрине ҫӗмӗрсе пырса кӗнӗҫ. Урамсенче хаяр ҫапӑҫусем пуҫланса кайрӗҫ. Ҫак ҫапӑҫусем кун каҫиччен те чарӑнмарӗҫ. Кашни ҫуртшӑн ҫапӑҫма тиврӗ. Подвалсемпе чердаксене нимӗҫсен автоматчикӗсем кӗрсе ларнӑ, ҫуртсем хыҫӗнчи садсемпе пахчасенче тӑшманӑн минометчикӗсем вырнаҫнӑ. Вӗсен хӗвеланӑҫ еннелле чакмалли ҫулне пирӗн артиллери хӑйӗн вучӗпе пӳлсе лартрӗ. Вӗсем хӑйсене пуля пырса тивиччченех, хӗрлӗ паттӑрсен штыкӗ е гранати пӗтерсе тӑкиччченех ҫавтери хаяррӑн хирӗҫ тӑчӗҫ.

Эпир Руза хулине илтӗмӗр. Пирӗн войскӑсем хулана кӗчӗҫ. Вӗсем халӗ хула районӗнче тӑрса юлнӑ фашистсен уйрӑм, сапаланчӑк групписене пӗтерсе пыраҫҫӗ. Хаяр ҫапӑҫусем пулса иртнӗ вырӑнсенче халӗ нимӗҫ салтакӗсемпе офицерӗсен ҫӗршер виллисем, тупӑсем, боеприпассем, автомашинӑсем тата ытти пурлӑхсем сапаланса выртаҫҫӗ.

Нимӗҫсем хӑйсен чӗрӗ вӑйне те, техникӑлла средствисене те шеллемесӗрех, Рузӑна сыхласа хӑварма ҫине тӑрсах тӑрӑшрӗҫ. Руза хули вӑл стратеги тӗлӗшӗнчен паха ҫулсем пӗрлешнӗ вырӑна вырнаҫса ларнӑ. Анчах пирӗн войскӑсем пӗр хӑрӑс хӗснине, пирӗн командовани тӗрӗс те тӗплӗн шутласа пурнӑҫа ӑста кӗртнӗ маневрсем умӗнче тӑшман кунта та чӑтса, тытӑнса тӑраймарӗ.

Говоров генералӑн войскисем халь вӗҫленӗ операцие пӗр эрне маларах нимӗҫсен фронтне ҫӗмӗрсе татнипе пуҫланӑ. Ҫак эрне Хӗрлӗ Ҫарӑн боецӗсемпе командирӗсем тунӑ паттӑрлӑхӑн, харсӑрлӑхӑн, пултарулӑхӑн тӗслӗхӗсемпе паларса тӑрать. Ҫак тӗслӗхсенчен эпир хӑшпӗрисене кӑтартса паратпӑр.

Кӗҫӗн лейтенант Каранин ертсе пынипе противникӑн тылне пирӗн 30 разведчик кӗрсе кайнӑ. Вӗсен задачи— тӑшманӑн каялла чакмалли ҫулне пӳлсе лартса, вӗсене тарма май парас мар тесе, кӗпере сирпӗтсе ярасси пулнӑ. Ҫак задачӑна вӗсем питӗ чаплӑн пурнӑҫа кӗртнӗ. Разведчиксем нимӗҫсен боеприпассем турттарса пыракан виҫӗ лавне тата пилӗк нимӗҫ салтакне пӗтерсе тӑкнӑ та каялла таврӑнма тухнӑ. Сукмак тӑрӑх утса пынӑ чухне вӗсем сасартӑк противникӑн артиллерийӗ патне пырса тухнӑ. Инҫене перекен пилӗк тупӑ патӗнче нимӗҫсен чылай пысӑк групни ҫине тӑрсах тӑрмашнӑ. Совет войскисем еннелле вӗсем снаряд хыҫҫӑн снаряд ӑсатнӑ. Разведчиксен группин командирӗ Каранин самантрах харсӑр решени йышӑнать те ҫавӑнтах команда парать. Совет паттӑрӗсен пӗчӗк ушкӑнӗ, автоматсенчен питӗ вӑйлӑн пеме пуҫласа, нимӗҫсем ҫине сиксе ӳкет. Чи малтанах офицера персе ӳкереҫҫӗ. Чӗрӗ тӑрса юлнӑ салтаксем сехӗрленсе ӳкнипе чӑлпар ҫеҫ тарса саланаҫҫӗ. Ҫак операцие пула пирӗн алла инҫене перекен 4 тупӑсӑр пуҫне тата 4 грузовой машина, пӗр ҫӑмӑл машина, пӗр мотоцикл, темӗн чухлӗ боеприпассем тата паха документсем лекнӗ.

Рузӑна каймалли ҫул ялсем витӗр, уйсемпе вӑрмансем урлӑ выртать. Нумаях та пулмасть ҫаксене пурне те нимӗҫсем йышӑнса тӑратчӗҫ. Ҫак ялсенче, уйсемпе вӑрмансенче паян тӑшманӑн салтакӗсемпе офицерӗсен виллисем, лашасен виллисем, аркатса тӑкнӑ нимӗҫ обозӗсен мӗскӗн юлашкийӗсем, автомобильсем, тягачсем, мотоциклсем, тупӑсем йӑваланса выртаҫҫӗ. Ҫак вырӑнсенчех нимӗҫсен персе усӑ курма ӗлкӗреймен патронӗсемпе снарячӗсем, вӑрӑм ӗывӑҫ аврӑллӑ гранатисем сапаланса выртаҫҫӗ. Пур ҫӗрте те пирӗн ҫиҫӗм пек хӑвӑрт ҫӳрекен кавалеристсем пырса тапӑннин йӗрӗсем, красноармеецсем паттӑррӑн пырса тапӑннин, чеелӗхпе хастарлӑхӑн йӗрӗсем, пирӗн артиллеристсем тӗл пенин йӗрӗсем паларҫҫӗ.

Ак ҫакӑнта, Л. ялӗ патӗнче, ҫапӑҫура взвод командирӗ пулса тӑнӑ красноармеец-курсант ҫапӑҫнӑ. Розанов юлташ хӑйӗн взвочӗпе тӑрса ҫапӑҫса нимӗҫсен чылай пысӑк отрядне ялтан ҫапса кӑларнӑ та тӑшмана хыҫран хӑваласа, инҫене перекен 4 тупӑ, пӗр противотанковӑй тупӑ, боеприпассем тиенӗ обоз тата ытти тӗрлӗ пурлӑхсем те тытса илнӗ.

Ак кунта, нимӗҫ салтакӗсен виллисене шаршанласа купаласа хунӑ ҫӗрте, пулемет ротин командирӗ лейтенант Четвериков ҫапӑҫнӑ. Атака вӑхӑтӗнче вӑл, алла ручной пулемет тытса танк ҫине сиксе хӑпарса ларнӑ та, хӑйне персе вӗлерессине пӑхмасӑрах тӑшмана пулеметран персе пӗтерсе пырса, хӑйӗн ротине ҫапӑҫӑва ертсе кайнӑ. Четвериков ҫак паттӑр атакӑра хӑйӗн пуҫне хунӑ; анчах вӑл хӑйӗн чӗри тапма чарӑниччен хӑй пӗччен ҫеҫ 50 фашиста яхӑн пӗтерсе тӑкнӑ.

Ак кунта пулемет взвочӗн командирӗ Хохленков юлташ вилнӗ. Хӑйӗн пулеметчӗн вучӗпе вӑл нимӗҫ салтакӗсен ротине сапаласа янӑ. Вӑл ҫапӑҫу хирӗнче чаплӑ вилӗмпе, хӑйӗн боецӗсене: «Малалла, тӑшман ҫине! Фашистсем ӗмӗрне те Мускавра пулмӗҫ!» тесе команда парса вилнӗ. Боецсем хӑйсен командирӗн вилӗмӗшӗн тивӗҫлипех тавӑрнӑ. Нимӗҫсен фашистла ирсӗрӗсене пӗтерсе пырса, вӗсем Гитлер салтакӗсене Н. тата Т. салисенчен ҫапса кӑларнӑ.

Шӑн ҫӗр те юр. Куҫран пырса тӗксен те нимӗн те курӑнмасть. Анчах малалла куҫассине чарма юрамасть. Тӑшмана чарӑнма пӗлмесӗр хӑваласа, ҫапса пымалла! Старший политрук Шумилин комиссар пулса тӑракан чаҫӗн боецӗсем яла хупӑрласа илнӗ. Кӑнтӑрла ку яла тытса илме май килмен: тӑшман урнӑ пек вут сапса тӑнӑ. Апла пулсан, яла ҫӗрле тытса илмелле. Старший лейтенант Алексеевӑн группи сулахай енчен, Нарев командирӑн группи сылтӑм енчен пынӑ. Ҫӗрӗн тӗттӗмлӗхӗпе усӑ курса, вӗсем сасартӑк яла ҫӗмӗрсе кӗрсе кайнӑ. Нимӗҫсем, хӑйсем ҫине ҫакӑн пек харсӑррӑн пырса тапӑнассине кӗтменскерсем, пӑшалсенчен нимӗне пӗлмесӗр пеме тытӑннӑ. Анчах та вӗсем кая юлнӑ ӗнтӗ. Шумилин юлташӑн боецӗсем нимӗҫсем вырнаҫнӑ ҫуртсене чӳречесенчен гранатӑсем пӑрахнӑ, нимӗн тума та аптӑраса ӳкнӗ салтаксене автоматсенчен пере-пере пӑрахнӑ. Тӑшман, хӑйӗн вилнӗ тата аманнӑ салтакӗсене темӗн чухлӗ пӑрахса хӑварса, хӑйӗн материальнӑй чаҫне, миномечӗсене, пулемечӗсене, винтовкисене, лавӗсене, тӗрлӗ пурлӑхӗсене тата пинӗ-пинӗпе патронсем пӑрахса, ялтан тухса тарнӑ.

Чи хаяр ҫапӑҫу пынӑ вӑхӑтра Авилов старшинан танкӗ малалла вӗҫтерсе тухнӑ. Танка пилӗк ҫӗртен персе шӑтарнӑ пулнӑ, унӑн башни ҫаврӑнман. Анчах Авилов танкӗн экипажӗ ӗҫсӗр ларма шутламан, чи татӑклӑ самантра ҫапӑҫу хирне пӑрахса каяс килмен унӑн. Вӑл халӗ хӑйӗн туппипе тата гусеницисемпе ӗҫлеме пултарнӑ. Вара танк тӑшманӑн пехоти ҫине тата противотанковӑй туппи ҫине ҫӗмӗрсе кӗрсе кайнӑ. Тӑшманӑн туппине лутӑркаса тӑкнӑ, пехотине гусеницӑпа таптаса лапчӑтса пӗтернӗ. Нимӗҫсем чӑтса тӑрайман, тарма тытӑннӑ, Авилов танкӗ вӗсене хыҫран хӑваласа таптаса пынӑ. Тӑшман хыҫҫӑнах вӑл яла ҫӗмӗрсе кӗнӗ те тӳрех тӑшманӑн инҫене перекен артиллерийӗ ҫине пырса тухнӑ. Нимӗҫсем совет танкӗ хастаррӑн хӗснине чӑтса тӑрайман, икӗ йывӑр туппа боеприпасӗ-мӗнӗпех пӑрахса, тарса саланса пӗтнӗ. Ҫак вӑхӑтра пирӗн пехота тӑшмансенчен тасатнӑ ҫӗнӗ рубежсенче ҫирӗпленсе ларнӑ.

Хаҫат валли ҫырнӑ корреспонденцире пур паттӑрсемпе геройсем ҫинчен те мӗнле каласа тухас-ха! Вӗсен паттӑрла ӗҫӗсене хисеплесе тухма та ҫук вӗт!

Пирӗн чаҫсем Можайск еннелле наступлени туса пыма пуҫланӑранпа темиҫе кун ҫеҫ иртрӗ. Ҫак темиҫе кун хушшинчех пирӗн войскӑсем, тӑшмана Мускавран хӗвеланӑҫ еннелле темиҫе вуншар километра хӑваласа ярса, ҫӗршер ялсемпе саласене ирӗке кӑларчӗҫ. Юн ӗҫме юратакан тискер кайӑк хӳрине хӗстерсе Мускавран аяккарах чакса пырать. Анчах вӑл ҫапах та шӑлӗсене хаяррӑн шатӑртаттарать, вырӑнӗ-вырӑнӗпе хаяр ҫапӑҫусене те кӗрсе каять. Анчах та пирӗн боецсемпе командирсем тӑшмана сывлӑш ҫавӑрма памаҫҫӗ. Вӗсем ӑна пӗр шеллемесӗр пӗтерсе пыраҫҫӗ.

КУЗНЕЦОВ.

(«Известия», декабрӗн 20-мӗш).

ВКП(б) Мускав Область Комитечӗн пленумӗ

Декабрӗн 20-мӗшӗнче Пӗтӗм Союзри Коммунистсен (большевиксен) Партин Мускав Область Комитечӗн пленумӗ пулнӑ. Пленум Сталин юлташ Мускав Совечӗн чаплӑ ларӑвӗнче ноябрӗн 6-мӗшӗнче тунӑ хӑйӗн докладӗнче тата 1941 ҫулти ноябрӗн 7-мӗшӗнче Хӗрлӗ площадьре каланӑ сӑмахӗнче кӑтартса панисене пурнӑҫа мӗнле кӗртсе пыни ҫинчен ВКП(б) Мускав Область Комитечӗн тата Мускав Хула Комитечӗн секретарӗн Щербаков юлташӑн докладне итленӗ.

ВКП(б) Мускав Комитечӗн пленумӗ боеприпассем, хӗҫпӑшал тата фронта каякан ытти тӗрлӗ продукци нумайрах туса кӑлармалла тӑвас тӗлӗшпе мероприятисем палӑртса хунӑ. Предприятисене пӗр татти-сыпписӗр ӗҫлемелле тӑвас тесе, пленум партипе совет организацийӗсен руководителӗсене топливӑна тата электроэнергие перекетлес тӗлӗшпе, вут хутмалли сезона валли вӑхӑтрах вут-шанкӑ хатӗрлесе хурас тӗлӗшпе конкретно ӗҫлеме хушнӑ.

Ҫавнашкалах тата пленум партипе совет организацийӗсене чугунҫулсене, кӗперсене, станцисене юсаса йӗркене кӗртес, вагонсене вӑхӑтра пушатса вӑхӑтра тиес, ҫулсене юр хӳсе кайиччен сыхлас тӗлӗшпе железнодорожниксене пулӑшу пама хушнӑ. 1942 ҫулта, вӑрҫӑ обстановкине пула, ҫураки ӗҫӗ уйрӑм условисенче пулса иртессине шута илсе, пленум партипе совет организацийӗсене пурне те ҫуракине хатӗрленес тӗлӗшпе тумалли ӗҫсене халех пуҫласа яма, вӑрлӑх хатӗрлесе хума, ялхуҫалӑх машинисене юсассине организацилеме хушса хӑварнӑ. Пленумра ВКП(б) Мускав Область Комитечӗпе Ӗҫҫынни Депутачӗсен Совечӗн Исполкомӗ нимӗҫ оккупанчӗсенчен тытса илсе ирӗке кӑларнӑ облаҫсенчи хуҫалӑха йӗркелес тӗлӗшпе палӑртнӑ мероприятисем ҫинчен каласа панӑ. Ҫак тума палӑртнӑ мероприятисем хисепне промышленность предприятийӗсене, коммунальнӑй хуҫалӑха, колхозсемпе совхозсене йӗркелесе ӗҫе ярасси, пурӑнмалли ҫурт-йӗрсем тӑвасси, ҫавнашкалах тата фашистла мародерсем тискер кайӑкла ҫаратса хӑварнӑ хуласемпе ялсенчи халӑха пулӑшу парасси кӗрет.

Пленум парти организацийӗсене партиллӗ тата политикӑллӑ ӗҫе лайӑхлатма хушса, Мускав хулинчи большевиксене тата Мускав облаҫӗнчи мӗнпур ӗҫҫыннисене нимӗҫсен фашистла захватчикӗсене хирӗҫ кӗрешекен Хӗрлӗ Ҫара пулӑшу пама татах та ытларах вӑй хурса, тӑрӑшса ӗҫлеме чӗнчӗ.

Ялхуҫалӑх работникӗсен канашлӑвӗ

Декабрӗн 20-мӗшӗнче Чӑваш АССР Совнаркомӗнче республикӑри ялхуҫалӑх работникӗсен канашлӑвӗ пулса иртрӗ. Канашлура районсенчи ҫӗрӗҫ пайӗсен заведующийӗсем, МТС директорӗсем тата ыттисем пулчӗҫ. Чӑваш АССР Совнаркомӗн председателӗ Сомов юлташ, районсенче 1941 ҫулти ялхуҫалӑх ӗҫӗн ҫулӗ мӗнле вӗҫленсе пынине тата колхозсемпе машинно-тракторнӑй станцисем ҫитес ҫулхи ҫуракине хатӗрленме мӗнле тытӑннине тишкерсе тухса, канашлӑва пухӑннӑ ҫынсене ялхуҫалӑх ӗҫӗсен 1942 ҫулти ӗҫ планӗпе паллаштарса доклад туса пачӗ.

Фабрикӑсемпе заводсенчи рабочисем, хӑйсен пӗтӗм ӗҫне вӑрҫӑ вӑхӑтне тивӗҫлӗ пек урӑхлатса ҫӗнетсе, хамӑр Хӗрлӗ Ҫара, Хӗрлӗ Флота хӗҫпӑшал тата боеприпассем ытларах та ытларах туса парассишӗн ывӑнма пӗлмесӗр ӗҫлеҫҫӗ. Пирӗн колхоз уйхирӗсенче колхозниксем тырпул тухӑҫлӑхне ӳстерессишӗн тӑрӑшаҫҫӗ.

Чӑваш республикин ялхуҫалӑхӗ 1941 ҫулта тырпул тухӑҫне татах та хӑпартрӗ. Вӑтам шутпа кашни гектар пуҫне кӑҫал колхозсем 13 центнер ытларах тӗштырӑ туса илчӗҫ. Ҫанталӑк пысӑк тупӑшлӑ тырпул туса илме лайӑхах пулман пулсан та тата вӑрҫӑ йывӑрлӑхӗсем пулнӑ пулсан та, 1941 ҫулта колхозсем иртнӗ ҫултинчен пысӑкрах тырпул туса илчӗҫ.

Отечественнӑй вӑрҫӑ ялхуҫалӑх умне пысӑк задачӑсем кӑларса тӑратрӗ. 1942 ҫул пирӗн колхозсемпе машинно-тракторнӑй станцисем умне татах та пысӑкрах, ответлӑрах задачӑсем лартать. Нимӗҫ захватчикӗсем пирӗн ҫӗршыв ҫине вӑрӑ-хурахла тапӑнса Совет Союзӗн хӑшпӗр облаҫӗсене, районӗсене тытса илчӗҫ. Ҫав вӑхӑтлӑх ҫухатусем пысӑк ҫухатусем пулнине ӗҫҫыннисем лайӑх ӑнланаҫҫӗ. Ҫав ҫухатусене пирӗн хамӑрӑн ҫӗр ҫинче хальхинчен темиҫе хут пысӑкрах тырпул, пахча-ҫимӗҫ туса илнипе витмелле. 1942 ҫулта пирӗн уйхирсенче ҫӗнӗ культурӑсем ҫитӗнтермелле. Вӑл шутра йӗтӗн, кантӑр тата кок-сагыз пысӑк вырӑн йышӑнаҫҫӗ. 1942 ҫулта пирӗн колхозсен темиҫе хут ытларах кӗртырри акса хӑвармалла, кӑҫалхинчен темиҫе хут нумайрах ҫӗрулми туса илмелле.

1942 ҫулти ҫуракине хатӗрленсе ҫитесси халӗ тырпула аван пуҫтарса вӑрлӑх фончӗсене ҫителӗклӗн хывса ҫитернинчен нумай килет. Ҫак ӗҫе большевикла тимлӗхпе тума халех тытӑнмалла.

Ҫуракине хатӗрленес ӗҫ халӗ республикӑра ҫителӗклӗ пулса пырать теме ҫук-ха. Машинно-тракторнӑй станцисем тракторсене тата ялхуҫалӑх машинисене юсас ӗҫе иртнӗ ҫулхинчен маларах тата аванрах тума тытӑнчӗҫ пулсан та, ҫапах вӑл ӗҫре ҫитменлӗхсем те нумай. 1942 ҫулта машинно-тракторнӑй станцисен ик-виҫ хут ытларах ӗҫлеме тивет. Мӗншӗн тесен, ҫурхи тата кӗрхи тырӑсем акӑнмалли ҫӗр лаптӑкӗсем нумайрах пулаҫҫӗ. Ҫавӑнпа вара халӗ тракторсен паркӗсене лайӑх юсаса ҫитересси питӗ пысӑк ӗҫ пулса тӑрать. Юсанӑ тракторсен пахалӑхӗшӗн МТС директорӗсен хӑйсен ответ тытмалла.

Пирӗн ялхуҫалӑхӗ умӗнче тӑракан 1942 ҫулхи ҫак пысӑк задачӑсене Сомов юлташ уҫҫӑн каласа пачӗ. Вӗсем ялхуҫалӑхӗн 1942 ҫулти ӗҫ планӗнче паларса тӑраҫҫӗ. Вӑл задачӑсене большевикла тимлӗхпе пурнӑҫлас тесе пӗтӗм вӑя пухса ӗҫлеме кирлине пире Сталин юлташ кӑтартса панӑ.

Сомов юлташ докладӗ тӑрӑх пурӗ 19 ҫын тухса каларӗ. Вӗсем хӑйсен сӑмахӗсенче 1942 ҫулхи ялхуҫалӑх ӗҫӗсен планне ырларӗҫ, ӑна пурнӑҫлама ҫителӗклӗ майсем пуррине кӑтартса пачӗҫ.

Роскаучук конторин Чӑваш республикинчи пайӗн заведующийӗ Ефимов юлташ ҫитес ҫул колхозсен уйхирӗсенче кок-сагыз культурине лартса ӳстерессине ҫинчен каларӗ. Вӑл культура пирӗн республика условисенче те лайӑх ӳсме пултарнине иртнӗ ҫулсенче тунӑ опытлӑ ӗҫсем лайӑх кӑтартса панӑ. Анчах кок-сагыз культурине туса илме унӑн агротехникине колхозниксене вӗрентмелле, ку ӗҫӗн кадрӗсене хатӗрлемелле.

Лаврентьев (Хӗрлӗ Чутай МТС директорӗ), Петров (Ҫӗмӗрле районӗнчи МТС директорӗ) юлташсем ҫитес ҫулхи ҫуракине тата ялхуҫалӑх ӗҫӗсене тума трактористсем, комбайнерсем, механиксем хатӗрлес ӗҫ ҫинчен, ку ӗҫ халӗ ҫителӗксӗр пулса пыни ҫинчен каларӗҫ. Вӗсемех машинно-тракторнӑй станцисен вӑйӗпе туллин усӑ курас тӗлӗшпе вырӑнта топливо хатӗрлес ӗҫе организацилени пысӑк вырӑн йышӑнса тӑни ҫинчен каларӗҫ. Газогенераторнӑй тракторсем валли чурка хатӗрлес ӗҫе пӗр учреждени аллине пӗрлештерсе, вӑл ӗҫе вӑрманпромхоз артелӗсене, предприятисене хутшӑнтарма ыйтрӗҫ.

Канашлура Чӑваш АССР Совнаркомӗн председателӗн заместителӗ С. К. Коротков тухса каларӗ. Вӑл кок-сагыз культурине туса илмелли майсем ҫинчен чарӑнса тӑчӗ. Ку культурӑна акма ҫӗре епле хатӗрлемелли ҫинчен каларӗ.

— Сталин ячӗпе тӑракан Ленин орденлӗ колхозра эпир ӗҫе ҫапла йӗркелерӗмӗр, — тет Коротков юлташ. — Халӗ колхозсенче паян туса пымалли ӗҫсем ҫаксем: оборона мероприятийӗсем, вӑрман хатӗрлес ӗҫ, аван ҫапас ӗҫ, ҫуракине хатӗрленес ӗҫ тата выльӑх-чӗрлӗх ӗрчетес ӗҫ. Ӗҫ вӑйне лайӑх организацилесен, ҫак ӗҫсене пурне те ӑнӑҫлӑн туса пыма пулать. Кольцовка колхозӗ оборона ӗҫӗсенче пӗрмаях ӗҫлеме уйрӑм бригада турӗ, унӑн пуҫӗнче бригадир тӑрать. Ҫавӑн пекех вӑрман хатӗрлес ӗҫе тума та уйрӑм бригада тунӑ. Унпа та тепӗр бригадир ертсе пырать. Вӗсем те вӑрман хатӗрлес плана мӗн тултариччченех ӗҫлемелле. Уйхир бригадисен виҫҫӗмӗш бригадирӗ аван ҫапас ӗҫпе ертсе пырать. Кунта та ӗҫе мӗн вӗҫне ҫитеричченех ӗҫлекен уйрӑм бригада тунӑ. Вӗсем аван ҫапса тырпула тирпейлесе кӗлтесене кӳртес пирки ҫеҫ ӗҫлеҫҫӗ. Ҫуракине хатӗрленес енӗпе халӗ мӗн тумалла? Урапасем, хӑмӑт-пӑявсем, вӗренсем хатӗрлемелле. Кӑна тӑвакансем те пӗр бригадӑна пӗтӗҫнӗ. Унта йывӑр ӗҫе тума пултарман ватӑ колхозниксем, колхозницӑсем ӗҫлеҫҫӗ. Выльӑх-чӗрлӗх ферминче ҫынсем час-часах улшӑнмаҫҫӗ, ҫавӑнпа унта та ӗҫ ӑнӑҫлӑн пырать. Ӗҫ вӑйне ҫакӑн пек йӗркеленипе колхоз пур ӗҫе те вӑхӑтра пурнӑҫласа пырать.

— Ҫитес ҫул пирӗн тӗштырӑ культурисене ҫеҫ мар, тата йӗтӗн, кантӑр, кок-сагыз, махорка культурисене тата пахча-ҫимӗҫ культурисене те анлӑн акса туса илмелле. Кӑҫал пирӗн колхозсем планран ирттерсе 24 пин гектар ҫинче кӗрхи тырӑ акса хӑварчӗҫ. Ҫитес ҫул кӗрхи тырӑсене акмалли лаптӑк 180 пин гектар пулмалла. Ку вӑл кӑҫалхи планран чылай пысӑкрах. Ҫак ӗҫсем вӑрҫӑ условийӗнче тухса тӑни пуриншӗн те паллӑ. Хамӑрӑн ҫӗршыва, хаяр тӑшманпа кӗрешекен пирӗн Хӗрлӗ Ҫарпа Хӗрлӗ Флота пулӑшса, пирӗн ҫак ӗҫсене пурнӑҫлама пӗтӗм вӑя пухса никӑҫанхинчен лайӑх ӗҫлемелле, — терӗ канашлура Чӑваш АССР Ҫӗрӗҫ Халӑх Комиссарӗ Малов юлташ.

Канашлура ВКП(б) Чӑваш Обкомӗн секретарӗ Чарыков юлташ сӑмах тухса каларӗ.

Чарыков юлташ Чӑваш республикинчи парторганизацине, ялхуҫалӑх ӗҫӗнчи руководительсене 1942 ҫулта ялхуҫалӑх умӗнче тӑракан пысӑк задачӑсене большевикла хастарлӑхпа пурнӑҫлама чӗнчӗ. Ҫитес ҫул эпир 35 пин гектар ҫинче ҫӗрулми туса илмелле. 1941 ҫулти планпа танлаштарсан, хӑшпӗр районсен ҫӗрулми лартас плана 200 процент таран пысӑклатмалла пулать. Ҫакӑн пекех кӗрхи тырӑсене акас план та нумай хут ӳсет тата йӗтӗн, кантӑр, махорка, кок-сагыз нумай акса тумалла.

— Плана вӑхӑтра тата кирлӗ пек пурнӑҫламалла. «Ку ҫук», «ку ҫитмест» тесе тӑрсан, паллах, ӑна эпир пурнӑҫлаймастпӑр. Ҫитменлӗхсене ҫӗнтерсе, йывӑрлӑхсенчен тухма пӗлсе ӗҫлеме тӑрӑшсан, ку ӗҫре пурте большевикла парти ыйтнӑ пек хастарлӑн ӗҫлесен, умра тӑракан задачӑсене пурнӑҫлама эпир вӑй тупатпӑр, — тет Чарыков юлташ.—Калинин районӗнчи работниксем кадрсемпе лайӑх усӑ курса кӑҫал пысӑк тухӑҫлӑ тырпул туса илме пултарчӗҫ. Йывӑрлӑхсене ҫӗнтерсе, район кӑҫал пысӑк тухӑҫлӑ тырпул туса илчӗ, республикӑра малти вырӑна тухрӗ.

Чарыков юлташ тырӑ акмалли лаптӑксене сарас тесе ҫырма ҫатрасенчи лаптӑксемпе те усӑ курма чӗнчӗ. Сӗт паман ӗнесене, вӑкӑрсене ӗҫе кӳлсе, туртӑм вӑйне ӳстермелле. Ку вӑл эпир халиччен туман ӗҫ. Анчах ҫӗнтерӳ тӑвас пулсан, нимӗн умӗнче те чарӑнса тӑмалла мар. Ӗнесене тата вӑкӑрсене туртма, кӳлсе ҫӳреме халех вӗрентес пулать.

Хӑшпӗр руководительсем: тырӑ вӑрлӑхӗ тата вӑрлӑхлӑх ҫӗрулми ҫителӗксӗр, ҫавӑнпа плана тултараймастпӑр, теҫҫӗ. Кирлӗ вӑрлӑхсене ӑҫтан илсе килсе парасса шанаҫҫӗ-ши вӑл руководительсем? Инҫетрен илсе килеймӗпӗр вӗсене, ӑна вырӑнтах тупмалла, вырӑнтах вӑл пур та. Вӑрлӑх фончӗсене ҫителӗклӗ хатӗрлесе хурассишӗн халех тӑрӑшмалла.

Чарыков юлташ машинно-тракторнӑй станцисен ӗҫне хытӑ критиклерӗ. Хӑшпӗр МТС руководителӗсем тракторсене юсас ӗҫре иртнӗ ҫулхи йӑнӑшсене каллех тӑваҫҫӗ. Иртнӗ ҫулхи пекех, кӑҫал та малтан тракторсене техника енчен пӑхса тухаҫҫӗ, вак ҫӗмрӗксене юсаҫҫӗ тата пӗчӗк ремонт тӑваҫҫӗ. Пысӑк ремонт тӑвассине вара ҫуркуннене хӑвараҫҫӗ. Кун пек туни тӗрӗс мар. Ҫитес ҫул пире кашни тракторах кирлӗ тата вӑл туллин ӗҫлемелле, ҫавӑнпа йывӑртарах ӗҫсене — капитальнӑй ремонта чи малтан тумалла. Трактористсен, комбайнерсен пурнӑҫ тата ӗҫ условине лайӑхлатмалла. Кашни трактор бригадиннех уйра выртса тӑмалли тата ӗҫлемелли буткӑсем пулмалла.

Колхозсенче килвырӑнӗсемпе кирлӗ пек усӑ курмаҫҫӗ. Вӗсенче, уйри пекех, тырӑ акаҫҫӗ. Ку ӗҫ те тӗрӗс мар. Килвырӑнӗсенче ытларах пахча-ҫимӗҫ туса илме тӑрӑшмалла.

Чарыков юлташ ялхуҫалӑх кадрӗсене хатӗрлес ӗҫ ҫинче чарӑнса тӑчӗ. Ҫитес ҫул ялхуҫалӑх ӗҫӗсене хӑвӑрт тата ӑнӑҫлӑн пурнӑҫлама пире ялхуҫалӑх ӗҫне пӗлекен кадрсем нумай кирлӗ. Халӗ кадрсем хатӗрлес ӗҫ начар пулса пырать. Ялхуҫалӑх курсӗсенче халӗ пурӗ те 101 ҫын ҫеҫ вӗренеҫҫӗ. Ку тӗлӗшпе районсенчи ҫӗрӗҫ пайӗсен пуҫлӑхӗсем начар ӗҫлеҫҫӗ. Кадрсем хатӗрлессине халех организацилемелле. Ӑна тума пирӗн вӑй та пур, вӗрентмелли ҫынӗсем те пур. Районсенчи ҫӗрӗҫ пайӗсен заведующисен ӗҫе пуҫарса большевикла ертсе пымалла.